2 кӑтӑш сул тухать. Ханӗ 20 пус.

1941
АВГУСТ
22
ЮНКУН
162(6913) №

ЧӐВАШ КОММУНИ

Сӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе
Шупашкар хула комитечӗн,
ЧАССР Верховный Совечӗн
тата Шупашкар хула
Совечӗн хаҫачӗ

Промышленноҫа хӗл вӑхӑтӗнче ӗҫлеме лайӑх хатӗрлер

Промышленноҫа хӗле хатӗрлесси халӑх хуҫалӑхӗн хальхи вӑхӑтри питех те пысӑк задачи пулса тӑрать. Фабрикӑсемпе заводсене хӗле лайӑх хатӗрлесе кӗртнинчен, рабочисене хӗл вӑхӑтӗнче пурӑнма тата ӗҫлеме юрӑхлӑ условисем туса панинчен пирӗн промышленность малалла аталанса пырасси, вӑл хӗллехи уйӑхсенче ӑнӑҫлӑ ӗҫлесси килет. Промышленность ӗҫӗнчи пуян опыт ҫакна кӑтартса парать: хӗле пур енӗпе те лайӑх хатӗрленсе кӗтсе илнӗ предприятисем хӗлӗн расна условийӗсенче те ӗҫ хӑвӑртлӑхӗпе тухӑҫлӑхне чакармаҫҫӗ, производство программине пурпӗрех ӑнӑҫлӑн тултарса пыраҫҫӗ, нумай та лайӑх продукци туса кӑлараҫҫӗ. Хӗле начар хатӗрленсе кӗнӗ предприятисен ӗҫӗ вара хӗлӗн йывӑр условийӗсенче ялӑхать, кулленхи график пурнӑҫа кӗрсе пыми пулать, продукци туса кӑларасси юлса пыма пуҫлать. Кӑна ӑнӑр хамӑр республикӑри предприятисен иртнӗ ҫулхи ӗҫӗнчен те лайӑх куртӑмӑр.

Иртнӗ ҫулта пирӗн республикӑри хӑшпӗр предприятисем хӗле кирлӗ пек хатӗрленсе кӗтсе илмен пирки кайран ӗҫре пысӑк чӑрмавсем пулчӗҫ. Хӗллехи уйӑхсенче чӑрмавсем курса ӗҫлени малта пыракан предприятисенче те, сӑмахран, Канашри вагонсем юсакан заводра та пулчӗ.

Паллах, кӑҫал хӗле хатӗрленес ӗҫре иртнӗ ҫулта пулнӑ ҫитменлӗхсене тума юрамасть, иртнӗ ҫулхи уроксене пӗтӗмпех шута илес пулать. Хӗле хатӗрленес ӗҫе вӑраха хӑварса пымалла мар, иртерех тытӑнмалла. Календарь ҫинче халӗ — август, ун хыҫҫӑн кӗрхи уйӑхсем ҫитеҫҫӗ. Промышленноҫа хӗле хатӗрлес ыйтӑва ҫивӗччӗн партма вӑхӑт ӗнтӗ.

Промышленноҫа хӗле тивӗҫлипе хатӗрлес тесен, мӗн-мӗн тумалла-ха?

Чи малтанах, материалсем, чӗртавар тата топливо хӗл каҫма кирлӗ чухлех хатӗрлемелле. Унтан, оборудованисене лайӑх юсамалла, цехсене ӑшӑ тытакан тумалла, энерги паракан хуҫалӑха йӗркелемелле. Юлашкинчен, рабочисем пурӑнакан ҫуртӗсене юсаса тухмалла, вӗсем валли вутӑ ҫителӗклӗ хатӗрлемелле.

Малта пыракан предприятисем, Ҫӗнтерӳ ячӗпе пыракан социализмлӑ ӑмӑртура тухӑҫлӑ ӗҫлесе, продукци нумай туса кӑларнине пӗрлех, хӗле хатӗрленес тӗлӗшпе те тимлӗн ӗҫлеҫҫӗ. Ҫӗмӗрле комбиначӗн коллективӗ, социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, Октябрьти революци 28 ҫул тултарнӑ тӗле хӗле пӗтӗмпех хатӗрленсе ҫитме обязательство илнӗ. Комбинатри рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем тата кил хуҫи хӗрӑрӑмӗсем те халӗ ҫав обязательствӑна пурнӑҫа кӗртессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Кашни цех коллективӗ хӑйӗн цехне ӑшӑ тытмалла тӑвать, оборудованисене юсать, унсӑр пуҫне рабочисем пурӑнакан пӗр-пӗр ҫурта юсать. Миронов юлташ начальник пулса тӑракан цехра ӗҫлекенсем, сӑмахран, рабочи поселокри 30-мӗш номерлӗ ҫурта юсаса пӗтернӗ. Дзержинец юлташ ертсе пыракан цехри рабочисем те хӑйсене ҫирӗплетсе панӑ ҫуртсене октябрьӗн 15-мӗшӗччен юсаса пӗтереҫҫӗ. Завод управленийӗ, партипе профсоюз организацийӗсем вутӑ хатӗрлес ӗҫ ҫине тимлӗн ҫаврӑнса пӑхаҫҫӗ. Кунта хӑрпӑрхӑй валли вутӑ хатӗрлес ӗҫе килхуҫи хӗрӑрӑмӗсем йышлӑн хутшӑнаҫҫӗ.

Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен завод коллективӗ те хӗле кӗтсе илес тӗлӗшпе чылай ӗҫсем тӑвать. Кунта халӗ производство корпусӗсене, рабочисем пурӑнмалли ҫуртсене ҫӗнӗрен тӑваҫҫӗ, кивисене юсаҫҫӗ, вутӑ хатӗрлеҫҫӗ т. ыт. те. Ку заводра хӗле хатӗрленес ӗҫӗн анлӑшӗ пысӑк, анчах хӑвӑртлӑхӗ вара пачах та ҫителӗксӗр. Ҫитес куҫенчех кунта ӗҫӗн хӑвӑртлӑхне ӳстерни кирлӗ.

Куславкка комбинатӗнчи главнӑй механик отделӗ хӗле хатӗрленес тӗлӗшпе мӗнмӗн тумаллине тата ҫав ӗҫсен срокӗсене пӗтӗмпех палартнӑ. Юсав ӗҫӗсен графикне кашни цеха ҫитерсе панӑ. Анчах ӗҫ график тунинчен малах кайман-ха. Нумай пулмасть пулса иртнӗ парти пухӑвӗ комбинатра хӗле хатӗрленме пуҫӑнманпа пӗрех тесе палартса хӑварчӗ. Федоров тата Шутов юлташсем ертсе пыракан цехсенче кӑна ку тӗлӗшпе хӑшпӗр ӗҫсене тунӑ, ытти цехсенче ӗҫе тытӑнман. Юсав ӗҫӗсем чарӑнса тӑни снабжени отделӗ кирлӗ материалсене вӑхӑтра тупса паманнинчен килет. 37 тӗрлӗ материалран 22 материал кӑна пур, вӗсем те ҫителӗклӗ мар. Чи кирлӗ материалсем — известь, цемент, кирпӗч ҫук. Рабочисен пурӑнмалли ҫуртчӗсене юсас, вутӑ хатӗрлес, подсобнӑй хуҫалӑхри вильӑх витисене хӗле хатӗрлес ӗҫсем те сӳрӗк пыраҫҫӗ.

Хӗле хатӗрленес ӗҫри ҫакӑн пек ҫитменлӗхсене республикӑри ытти предприятисенче те курма пулать. Челноков юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен заводра рабочи поселока юсама 350 пин тенкӗ уйӑрнӑ. Ҫак уйӑх тӗлне вӑл шутран 140 пин тенкӗ (40 процент) ҫеҫ усӑ курнӑ. Ҫав вӑхӑтрах рабочисем пурӑнакан ҫуртӗсене юсамалли сроксем тӑсӑлса пыраҫҫӗ. 22-мӗш, 26-мӗш номерлӗ общежитисене юсама тытӑнман.

Халӗ предприятисене хӗле хатӗрлеме, рабочисем пурӑнакан ҫуртӗсене юсама чи лайӑх вӑхӑт тӑрать. Хальхи вӑхӑтри кашни куҫпа, кашни сехетне тулинн усӑ курнинчен юсав ӗҫӗн пахалӑхӗ нумай килет. Паллах, производство цехӗсемпе рабочисем пурӑнакан ҫуртӗсене лайӑх пахалӑхпа юсамалла. Промышленноҫри партипе профсоюз организацийӗсен юсав ӗҫӗсене ӑнӑҫ тунине хыттӑн сивлемелле. Рабочисем ӗҫлекен кашни цех, пурӑнакан кашни пӳлӗм хӗл вӑхӑтӗнче тухӑҫлӑ ӗҫлеме, йӗркеллӗ пурӑнма юрӑхлӑ пултӑр!

Транспорт бригади пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлет

Вӑрнар районӗнчи Мӑн Турханти Ленин ячӗпе тӑракан колхоз государствӑна тырӑ памалли графика вӑхӑтра пурнӑҫласа пырать. Августӑн 5-мӗшӗпе 20-мӗш хушшинче колхозӑн 109 центнер тырӑ памалла пулнӑ. Кунта вара августӑн 16-мӗшӗ тӗлнех 119 центнер панӑ.

Колхозӑн транспорт бригади пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлет. Бригадӑра 8 ҫын, урапасем тата ут таврашсем лайӑх. Бригадӑна Хӗрлӗ Сартан халь кӑна таврӑннӑ М. Иванов юлташ ертсе пырать.

В. АЛГАЗИН.

МАЛТА ПЫРАКАН КОЛХОЗСЕНЧЕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Туҫа ял Советне кӗрекен «Комбайн», «Аниш», Буденный тата Тельман ячӗпе тӑракан колхозсем кӑҫал тырпул вырма организованно тухрӗҫ, уйӑрӑм сдельщинӑпа ӗҫленипе пула, кӗске вӑхӑт хушшинчех районри ытти колхозсенчен малтан ҫырӑлса пӗтерчӗҫ. Халӗ ҫак колхозсем пикенсех авӑн ҫапаҫҫӗ. Колхозри транспорт бригадисем кашни кунах государствӑна 15—20 лавпа тырӑ леҫеҫҫӗ. Ял Советӗнчи колхозсем пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Буденный ячӗпе тӑракан колхоз тырӑ вырас ӗҫе ытти колхозсенчен лайӑхрах организациленӗ тата кунта ӗҫ тухӑҫлӑхӗ те пысӑкрах. Ҫавна пула вӑл ял Совечӗн кусса сӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илчӗ.

Колхозсем халӗ вырнӑ ҫырӑлса итеме турттараҫҫӗ, кӗлтесене тинӗтеҫҫӗ те капана хывоҫҫӗ. Тырра ҫапас умӗн авӑнсенче тинӗтеҫҫӗ.

Буденный ячӗпе тӑракан колхозра та уйӑрӑм сдельщинӑпа ӗҫлеҫҫӗ. Кулленхи нормӑна иртерсе тултаракансем вунпиӗрӑн шутланаҫҫӗ. 3-мӗш бригадӑра пуринчен те тухӑҫлӑрах ӗҫлеҫҫӗ. Кунта нормӑна тултарман колхозниксем сукпа пӗрех. Мария Николаева, Татьяна Алексеева ҫурлапа вырса кулленхи нормӑна 250 процент тултараҫҫӗ. Машинист Василий Павлов жнейкӑпа кулленех нормӑна 130—140 процент тултарса вырать.

Ял Советне кӗрекен тӑватӑ колхозра та пучахсене пухассине организацилеӗ. Пучах пухас ӗҫе 45 ача хутшӑнӑ, вӗсем ик-виҫ кун хушшинче 413 килограмм пучах пухӑ.

Ял Советӗнчи пур колхозсенче те пӗрлешӳллӗ столовӑйсем пур, кунне 2 хутчен вӗри апат ҫитереҫҫӗ. Ача яслисем пур, унта 192 ача ҫӳрет.

Колхозсенче политикӑлӑ-массӑллӑ ӗҫе лайӑх йӗркеленӗ. Кашни бригадӑрах «Боевой листоксем» тухаҫҫӗ. Тельман ячӗпе тӑракан колхозра стена хаҫат редакторӗ пулса Мария Иванова ӗҫлет, вӑл тырӑ вырма тухнӑранпа 2 номер стена хаҫачӗ, 7 номер «Боевой листок» кӑларнӑ. Хаҫатсем ҫине малта пыракансем ҫинчен, вӗсен паха ӗҫӗ ҫинчен ҫыраҫҫӗ. Колхозсенче хаҫат витринисем, хисеп хӑмисем тунӑ.

Ял Советӗнчи колхозсем пуртӗ авӑн ҫапаҫҫӗ, государствӑна тырӑ леҫеҫҫӗ тата ыраш акаҫҫӗ.

Н. АНДРЕЕВ.

Тӑван ҫӗршыв вӑй-хӑватне ҫӗклентерсе пырас тесе, тырпул пухса кӗнӗ ҫӗрте пӗтӗм вӑйна хурса ӗҫле!

Ҫуртырри вырассӗ

ЕЛЧӖК, августӑн 20-мӗшӗ. (Телефонпа). Ыраш вырасси районра вӗҫленсе пырать. Паянхи кун тӗлне пурӗ 11230 гектар вырнӑ, 49 колхоз ыраш вырса пӗтернӗ. 54 колхоз ҫуртырри вырассӗ. Ленин ячӗпе тӑракан колхоз 126 гектар тулӑ, урпа тата сӗлӗ вырнӑ. «Трактор» колхоз 55 гектар, «Осоавиахим» колхоз 45 гектар, «КИМ» колхоз 101 гектар, Крупская ячӗпе тӑракан колхоз 62 гектар, Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз 140 гектар ҫуртырри вырнӑ. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозӑн ҫуртыррийӗ кӑҫал вӑйлӑ ҫитӗнчӗ. Кунта тырра алӑпа тата машинӑпа вырассӗ. Алӑпа выракансем уйӑм сдельщинӑпа ӗҫлеҫҫӗ. А. Емельянова, М. Леонтьева юлташсем тырӑ вырма тухнӑранпа кашни кунах хӑйсен нормине 200 процентран кая тултарман. Машинистсем ҫуртырри вырнӑ ҫӗрте уйӑрӑнах тухӑҫлӑ ӗҫлеҫҫӗ, кашнинех хӑйсен сменинче 5—7 гектар вырассӗ.

«КИМ» колхозра Рыбкина тата Алексеева колхозницӑсем ҫурлапа вырсах хӑйсен кулленхи нормине икӗ хут ытла тултараҫҫӗ. «Новая волна» колхозра Елизарова колхозница кӗлте ҫыхнӑ ҫӗрте хӑй нормине 190 процент тултарать.

Тырӑ вырнине пӗрлех, ыраш акас ӗҫ те пырать. Паянхи куна 2000 гектара яхӑн акнӑ, ыраша пӗтӗмпе тенӗ пекех ҫӗнӗ вӑрлӑхпа акаҫҫӗ. 1753 гектар ҫинчи ыраша ҫаннӑ. Уйӑрӑм колхозсем кӗлтесене капана хывма тытӑннӑ. Пурӗ 1978 гектар ыраша капана хывнӑ. Патрекелӗнчи «Осоавиахим» колхозра кӳлме вӗрентнӗ вӑкӑрсемпе кӗлте турттараҫҫӗ.

Государствӑна обязательство тӑрӑх тырӑ парас ӗҫ те пуҫланчӗ, паянхи куна 3412 центнер панӑ.

Транспорт бригади пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлет

Вӑрнар районӗнчи Мӑн Турханти Ленин ячӗпе тӑракан колхоз государствӑна тырӑ памалли графика вӑхӑтра пурнӑҫласа пырать. Августӑн 5-мӗшӗпе 20-мӗш хушшинче колхозӑн 109 центнер тырӑ памалла пулнӑ. Кунта вара августӑн 16-мӗшӗ тӗлнех 119 центнер панӑ.

Колхозӑн транспорт бригади пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлет. Бригадӑра 8 ҫын, урапасем тата ут таврашсем лайӑх. Бригадӑна Хӗрлӗ Сартан халь кӑна таврӑннӑ М. Иванов юлташ ертсе пырать.

В. АЛГАЗИН.

МАЛТА ПЫРАКАН КОЛХОЗСЕНЧЕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Туҫа ял Советне кӗрекен «Комбайн», «Аниш», Буденный тата Тельман ячӗпе тӑракан колхозсем кӑҫал тырпул вырма организованно тухрӗҫ, уйӑрӑм сдельщинӑпа ӗҫленипе пула, кӗске вӑхӑт хушшинчех районри ытти колхозсенчен малтан ыраш вырса пӗтерчӗҫ. Халӗ ҫак колхозсем пикенсех авӑн ҫапаҫҫӗ. Колхозри транспорт бригадисем кашни кунах государствӑна 15—20 лавпа тырӑ леҫеҫҫӗ. Ял Советӗнчи колхозсем пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Буденный ячӗпе тӑракан колхоз тырӑ вырас ӗҫе ытти колхозсенчен лайӑхрах организациленӗ тата кунта ӗҫ тухӑҫлӑхӗ те пысӑкрах. Ҫавна пула вӑл ял Совечӗн кусса сӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илчӗ.

Колхозсем халӗ вырнӑ ыраша ытеме турттараҫҫӗ, кӗлтесене тинӗтеҫҫӗ те капана хывоҫҫӗ. Тырра ҫапас умӗн авӑнсенче тинӗтеҫҫӗ.

Буденный ячӗпе тӑракан колхозра та уйӑрӑм сдельщинӑпа ӗҫлеҫҫӗ. Кулленхи нормӑна иртерсе тултаракансем вунпиӗрӑн шутланаҫҫӗ. 3-мӗш бригадӑра пуринчен те тухӑҫлӑрах ӗҫлеҫҫӗ. Кунта нормӑна тултарман колхозниксем сукпа пӗрех. Мария Николаева, Татьяна Алексеева ҫурлапа вырса кулленхи нормӑна 250 процент тултараҫҫӗ. Машинист Василий Павлов жнейкӑпа кулленех нормӑна 130—140 процент тултарса вырать.

Ял Советне кӗрекен тӑватӑ колхозра та пучахсене пухассине организацилеӗ. Пучах пухас ӗҫе 45 ача хутшӑнӑ, вӗсем ик-виҫ кун хушшинче 413 килограмм пучах пухӑ.

Ял Советӗнчи пур колхозсенче те пӗрлешӳллӗ столовӑйсем пур, кунне 2 хутчен вӗри апат ҫитереҫҫӗ. Ача яслисем пур, унта 192 ача ҫӳрет.

Колхозсенче политикӑлӑ-массӑллӑ ӗҫе лайӑх йӗркеленӗ. Кашни бригадӑрах «Боевой листоксем» тухаҫҫӗ. Тельман ячӗпе тӑракан колхозра стена хаҫат редакторӗ пулса Мария Иванова ӗҫлет, вӑл тырӑ вырма тухнӑранпа 2 номер стена хаҫачӗ, 7 номер «Боевой листок» кӑларнӑ. Хаҫатсем ҫине малта пыракансем ҫинчен, вӗсен паха ӗҫӗ ҫинчен ҫыраҫҫӗ. Колхозсенче хаҫат витринисем, хисеп хӑмисем тунӑ.

Ял Советӗнчи колхозсем пуртӗ авӑн ҫапаҫҫӗ, государствӑна тырӑ леҫеҫҫӗ тата ыраш акаҫҫӗ.

Н. АНДРЕЕВ.

Ӑмӑртса ӗҫлесе

ЙӖПРЕҪ, августӑн 21-мӗшӗ. (Телефонпа). «Строитель», «Путиловка», «Искра», Ленин ячӗпе тӑракан тата ытти чылай колхозсем кӗрхи тырӑсене вырса пӗтерчӗҫ. «Строитель» колхоз иртнӗ ҫулсенче юлса пыракан колхозсенчен пӗри пулнӑ. Кунта СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ «1945 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановление кашни колхозникпа колхозницӑнах тӗплӗн ӑнлантарса панӑ. Тырпул пухса кӗртесси конкретлӑ план тунӑ. Вӑл плана пурнӑҫлама колхозниксемпе колхозницӑсене пурне те явӑҫтарнӑ. Колхозра социализмлӑ ӑмӑрту пуҫланса кайнӑ. Ҫак ӑмӑртура Полоруссова юлташ ертсе пыракан 1-мӗш бригада мала тухнӑ. Вӑл хӑйӗн участокӗнчи ыраша 6 кун хушшинче вырса пуҫтарнӑ. Ҫак бригадӑри А. Константинова, Ф. Ермакова, М. Никифорова колхозницӑсем куллен 0,20—0,22 гектар вырнӑ. Ытти колхозниксемпе колхозницӑсем вӗсемпе танлашма тӑрӑшнӑ. Ҫапла вара «Строитель» колхоз районра чи малтан ыраш вырса пӗтернӗ.

«МОПР» колхоз та кайра пыракан колхозсен шутӗнче пулнӑ. Кӑҫал ҫак колхозра Коннов юлташ ертсе пыракан 4-мӗш бригада лайӑх тӗслӗхсем кӑтартса ӗҫлет. Ҫак бригадӑри А. Купранова колхозница кулленех ҫурлапа 0,30 гектар вырать. М. Захрибина куллен 0,82 гектар хура тулӑ ҫулать. Кулленхи нормӑна 120—150 процент тултаракансем кунта кашни бригадӑрах 5—6 ҫын шутланаҫҫӗ. Ҫакӑ вара ӗҫе ӑнӑҫлӑн туса пыма пулӑшать.

П. КУРАКОВ.

Тырпул пухса кӗртмелли плана тултарса ӗҫлеҫҫӗ

Куславкка районӗнчи «Красная Чувашия» колхоз (председателӗ Андреев юлташ) тырпул вырса пухма лайӑх хатӗрленсе тухрӗ. Ҫавӑнпа та ыраш вырас ӗҫе кунта йӗркеллӗ ирттерчӗҫ. Пур ӗҫе те уйӑрӑм сдельщинӑпа, уйӑрӑм участоксенче тунине пула, кунта ыраш вырса кӗртнӗ ҫӗрте тухӑҫлӑ ӗҫлекенсем нумай пулчӗҫ. Антония Андреева колхозница ҫурлапа вырса кулленхи нормӑна 200 процент ытла тултарса ӗҫлет. Ҫавӑн пекех Татьяна Васильева, Матрена Семенова, Пелагея Егорова юлташсем кашни кун 0,23 гектар выраҫҫӗ. Ҫапла ӗҫленине пула кунта ыраша планпа палӑртнинчен икӗ кун маларах вырса пӗтернӗ. Кашни бригадӑрах хаҫат вуласа паракансемпе агитаторсем ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе колхозниксем каннӑ вӑхӑтра тӑваҫҫӗ. Совет Информаци Бюровӗ пӗлтернине тата хаҫатсенчи ҫӗнӗ хыпарсене вуласа параҫҫӗ. Ыраш вырма тухнӑранпа «Боевой листоксем» пурӗ 9 номер, стена хаҫачӗсем 2 номер кӑларнӑ. Колхозра хисеп хӑми тата кам мӗн чухлӗ ӗҫленине кӑтартакан хӑма тунӑ.

Тырпул пухса кӗртес ӗҫре ялти учительсем тата шкул ачисем активлӑн ӗҫлеҫҫӗ. Тӑкӑнса юлнӑ пучахсене пухма кашни кунах 17—20 ача хутшӑнать.

П. КОЗЛОВ.

Кашни пучаха — колхоз итемне

ТАВАЙ, августӑн 21-мӗшӗ. (Телефонпа). 22 колхоз кӗрхи тырӑсене вырса пӗтерчӗҫ. Тырпул пухса кӗртесси тата государствӑна тырӑ парасси «Социализм», «Новый путь», «Искра Ильича», «Звезда», Шмидт, Ленин ячӗпе тӑракан колхозсенче ӑнӑҫлӑ пырать. Ҫак колхозсем ыраш вырса пӗтеричченех авӑн ҫапма тата государствӑна тырӑ пама тытӑнчӗҫ. «Звезда» колхоз 118 центнер, «Новый путь» колхоз 111 центнер, «Социализм» колхоз 75 центнер тырӑ парса, пилӗккунлӑх графика нумай ирттерсе тултарчӗҫ. Чылай колхозсенче тырпул таккаланас хӑрушлӑх пур. Улӑмӗ типсе кайнӑ май, пучахсем хуҫӑлса тӑкӑнаҫҫӗ. Ҫакна шута илсе, кашни колхозрах пучахсене пухма шкул ачисемпе пионерсенчен ятарласа бригадӑсем тӑваҫҫӗ. Ленин ячӗпе тӑракан колхозра юлашки куншсенче кӑна шкул ачисем 18 центнер пучах пухнӑ. Смидович ячӗпе тӑракан колхозра пучах шухас ӗҫе кашни кун 60—70 ача тухать.

Тырпул пухса кӗртес тӗлӗшпе «Красная Армия», «25 лет Октября» колхозсем чӑтма ҫук начар ӗҫлеҫҫӗ. Кунта пӗрлешӳллӗ столовӑйсем ҫук. Жнейкӑсемпе вырмаҫҫӗ. Ҫурлапа выракансемпе ҫавапа сулаканнисем ӗҫе кая юлса тухаҫҫӗ, ӗҫрен ытла та ир тавӑрӑнаҫҫӗ. Ҫак колхозсем кая юлса пынине шута илсе, колхозниксемпе канашлусем туса ирттертӗмӗр, вӗсене малта пыракан колхозсен ӗҫри опычӗсемпе паллаштартӑмӑр. Колхоз руководителӗсемпе бригадирӗсене ӗҫре куллен пулӑшу пама тата агитаппллӗ-массӑллӑ ӗҫе туса пыма районри парти активӗнчен ответлӑ юлташсене ятӑмӑр.

Ҫавӑн пекех тата ҫак колхозсене МТС комбайнӗсемпе молотилкисене ятӑмӑр. Анчах та МТС комбайнӗсем колхозсене ҫак вӑхӑта ҫитсе те кирлӗ пек пулӑшу параймарӗҫ-ха. «Красная Армия» колхозра комбайн ик-виҫӗ сехет ӗҫлесенех, унӑн подшипникӗсем ирӗлсе кайнӑ.

Сӑмах май каласан, пирӗн МТС колхозсене тырпул пухса кӗртес ӗҫре кирлӗ пек пулӑшу параймасть. МТС директорӗ Белоруссов юлташ ответлӑха туйса ӗҫлемест. 17 комбайнран 13-шӗ кӑна ӗҫе юрӑхлӑ. Вӗсем те колхозра ӗҫлемеҫҫӗ-ха. Белоруссов юлташ комбайнерсемпе трактористсем мӗнле ӗҫленине, вӗсене мӗнле пулӑшукирлине хӑй те пӗлмӗст.

А. МОЛОСТВОВ.
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Машинӑсемпе усӑ курмаҫҫӗ

ИШЛЕЙ, августӑн 21-мӗшӗ. (Телефонпа). Тырпул пухса кӗртес ӗҫ районра ытла та вӑрахӑн пырать. Паянхи куна колхозсенче тата 1000 гектар ытла вырман ыраш пур. Районри 86 колхозран 30 колхоз кӑна ыраш вырса пӗтернӗ. «МОПР» колхоз ыраша ҫурринне те вырман. Ҫак колхозӑн юсавлӑ икӗ жнейка пур, вӗсемпе усӑ курмаҫҫӗ. Колхоз председателӗ Арсентьев юлташ хире те тухса курмасть. «Комбайн», «Волгарь» колхозсенче ыраша ҫурринне те вырман. «Авангард» колхоз председателӗ Бычков юлташ, машинӑпа вырсан ыраш таккаланать тесе, юсавлӑ жнейкӑпа усӑ курмасть. Ҫав вӑхӑтрах кунта машни тӑваткӑл метра 30—40 пучах таккаласа хӑвараҫҫӗ. Ҫак колхозра ВКП(б) райкомӗпе райисполком уполномоченнийӗ пулса ҫӗрӗҫ пайӗн главнӑй агрономӗ Федоров юлташ ӗҫлет, вӑл ҫак ҫитменлӗхсене курмасть. Кунта ҫуртыррисем те пулса ҫитнӗ, пӑрҫа тӑкӑнма та пуҫланӑ, анчах та тырпула хӑвӑртрах пухса кӗртес тесе кирлӗ пек ӗҫлени ҫук-ха. Колхозра ӗҫлеме пултаракансем 105 ҫын шутланаҫҫӗ, ӗҫе вара пурӗ те 70—80 ҫын кӑна тухать. Ӗҫе ирхине 8—9 сехетре тухаҫҫӗ те ирех кӗреҫҫӗ.

Районри колхозсенче юсавлӑ 62 жнейка пур, анчах та 12 жнейкипе кӑна усӑ кураҫҫӗ. Тӳррипе каласан, Ишмей районӗнчи руководительсем те машинӑпа ӗҫлессине хирӗҫлеҫҫӗ. Районри ҫӗрӗҫ пайӗн заведующийӗ Лазарев юлташ хӑй те: кӑҫал тырӑ выртнӑ, машинӑпа вырма май ҫук,—тесе ларать.

Ф. МАЛЫШКИН.

КОМБАЙНСЕМ ӖҪРЕ

Шӑмӑршӑ МТС-ӗн юсанӑ комбайнӗсенчен 9-шӗ колхозсенче ӗҫлеҫҫӗ. Халичченех вӗсем ытларах авӑн ҫапас ӗҫре пулнӑ. Паллӑ комбайнер В. Т. Фадеев юлташ хӑйӗн комбайнӗпе 100 гектар ҫинчи ыраша ҫаннӑ. Халӗ вӑл тулӑ вырать. 2 кун хушшипӗр чарӑнмасӑр ӗҫлесе, вӑл 50 гектара яхӑн вырнӑ. «Красная звезда» колхозра Орлов, «Труженик» колхозра Михайлов, «Светлый путь» колхозра Аверьянов комбайнерсем ҫуртырри выраҫҫӗ, вӗсем хӑйсен куллен нормисене тултарса пыраҫҫӗ.

Кунта авӑн ҫапма васкамаҫҫӗ

СОВЕТСКОЕ, августӑн 21-мӗшӗ. (Телефонпа). Тырпул вырмалли плана 55 процент тултарнӑ. Авӑн ҫапасси те районра начар мар пырать: 1500 гектар ҫинчи тырра ҫаннӑ. 2500 гектар ытла ыраш акнӑ.

Анчах та районра государствӑна тырӑ парас ӗҫ ҫителӗксӗр пырать-ха. Район пилӗккунлӑх графика тултарса пырайманнине ҫулсерен ӗҫе кая юлса тухаҫҫӗ, ӗҫрен ытла та ир тавӑрӑнаҫҫӗ. Ҫак колхозсем кая юлса пынине шута илсе, колхозниксемпе канашлусем туса ирттертӗмӗр, вӗсене малта пыракан колхозсен ӗҫри опычӗсемпе паллаштартӑмӑр. Колхоз руководителӗсемпе бригадирӗсене ӗҫре куллен пулӑшу пама тата агитаппллӗ-массӑллӑ ӗҫе туса пыма районри парти активӗнчен ответлӑ юлташсене ятӑмӑр.

Ҫавӑн пекех тата ҫак колхозсене МТС комбайнӗсемпе молотилкисене ятӑмӑр. Анчах та МТС комбайнӗсем колхозсене ҫак вӑхӑта ҫитсе те кирлӗ пек пулӑшу параймарӗҫ-ха. «Красная Армия» колхозра комбайн ик-виҫӗ сехет ӗҫлесенех, унӑн подшипникӗсем ирӗлсе кайнӑ.

Сӑмах май каласан, пирӗн МТС колхозсене тырпул пухса кӗртес ӗҫре кирлӗ пек пулӑшу параймасть. МТС директорӗ Белоруссов юлташ ответлӑха туйса ӗҫлемест. 17 комбайнран 13-шӗ кӑна ӗҫе юрӑхлӑ. Вӗсем те колхозра ӗҫлемеҫҫӗ-ха. Белоруссов юлташ комбайнерсемпе трактористсем мӗнле ӗҫленине, вӗсене мӗнле пулӑшукирлине хӑй те пӗлмӗст.

А. МОЛОСТВОВ.
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Хӗле хатӗрленеҫҫӗ

ҪӖРПӲ. Туҫи ял Советӗнчи «Цивильстрой» колхоз (председателӗ В. Герасимов юлташ) тырпул пухса кӗнӗ вӑхӑтрах хӗле те начар мар хатӗрленет. Колхоз нумай ҫул ӳсекен куракӗсене ҫулса 150 тонна силос хывнӗ. Колхозӑн ӗне, сурӑх, сысна, чӑх-чӗп фермисем пур. Халӗ 50 ӗне вырнаҫмалӑх ҫӗнӗ вите тата чӑх-чӗп вити туса пӗтереҫҫӗ. Ку ӗҫре платниксен уйӑрӑм бригади ӗҫлет. Фермӑра ӗҫлекенсем хӑйсемех кивӗ витесене юсаҫҫӗ, тӑмпа сӗреҫҫӗ, кантӑкӗсене лартаҫҫӗ. Ферма валли ҫителӗклӗ вутӑ хатӗрленӗ.

П. ТЕРЕНТЬЕВ.

Генералиссимус Сталин патне Эттли господин янӑ ҫыру

Ыну ҫитнӗ ятпа тата пирӗн Пӗрлешнӗ Патшасен ҫӗршӗм юлашки агрессора пӗтӗмпех ҫӗнтернӗ ятпа Сире ӑшшӑн ырӑ сунса саламлатӑп.

Халӗ пирӗн умра ӗнтӗ наципсем хушшинче ҫӗнӗ хӑват туса хурас ӗмӗт тӑрать. Ҫав хӑват пӗр-пӗрне шанманнине тата вӑрҫӑ пулассинчен хӑраса тӑнине сирсе ярӗ, ҫав хӑрушлӑхпа шанманлӑха пӗр-пӗрне шанса тӑрас кӑмӑлпа тата туслӑхпа улӑштарӗ. Унсӑрӑн мирпӗн нимӗнле шанчӑк та пулма пултараймасть. Ҫавна пула эпӗ пӗтӗм чун-чӗререн ҫакна ӗненсе тӑратӑп: ССР Союзӗпе Пӗрлешӳллӗ Корӗлевство хушшинче вӑрҫӑ пынӑ вӑхӑтра пулса тӑнӑ туслӑх тата пӗр-пӗрне ӑнланасси малаллне те сыхланса юлӗҫ, реконструкци ҫулӗсенче вӗсем татах та ытларах ҫирӗпленӗҫ, пирӗн хушӑри союзлӑ договор эпир пӗр-пӗринпе таччӑн та ҫирӗп пӗтӗҫҫе ӗҫлемелли никӗс пулӗ.

1945 ҫулхи августӑн 17-мӗшӗ.

Генералиссимус И. В. Сталинран— Премьер-Министра Эттли господина

Японие ҫӗнтернӗ ятпа Эсир туслӑн ырӑ сунса саламланӑшӑн Сире тав тӑватӑп тата хам енчен те Сире ҫав ҫӗнтерӳ ячӗпе ырӑ сунса саламлатӑп. Германипе Японие хирӗҫ пынӑ вӑрҫӑ тата агрессорсене хирӗҫ пынӑ, кӗрешӳри пирӗн пӗрлӗхӗ тӗллевсем Совет Союзӗпе Пӗрлешӳллӗ Королевствӑна пӗр-пӗринпе сывхартрӗҫ, эпир пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлесе ҫирӗплетрӗҫ. Ҫавӑн пек килӗштерсе ӗҫлеме халӗ ӗнтӗ пирӗн хушӑри союз ҫинчен тунӑ договор нумай ҫуллӑха никӗс пулса тӑрать.

Эпӗ ҫакна шанса тӑратӑп: вӑрҫӑра тата вӑрҫӑ хӑрушлӑхӗсенче тӗрӗсленнӗ туслӑх вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи вӑхӑтра пирӗн халӑхсен ырӑ кунҫулӗпӗн малалла аталанса, ҫирӗпленсе пырӗ.

1945 ҫулхи августӑн 20-мӗшӗ.

АВИАЦИ КУНЕ ЯЧӖПЕ КӐЛАРНА ҪЕНЕ МАРКӐСЕМ

Августӑн 19-мӗшӗнче СССР Сыхӑну Халӑх Комиссарначӗ Пӗтӗм Союзри авиаци кунӗ ячӗпе почта маркисем тытӑннӑ. Маркӑсем ҫинче Яковлев, Лавочкин, Ильюшин, Туполев, Петляков тата Поликарпов конструкцийӗсемпе тунӑ самолетсене ӳкерсе кӑтартнӑ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

АВГУСТӐН 21-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Августӑн 21-мӗшӗнче Маньчжурире пирӗн ҫарсем малалла куҫса пынӑ.

САХАЛИН утравӗн кӑнтӑр пайӗнче пирӗн ҫарсем СИКИГА, НАЙОРО,

ИНВАЛИДСЕН КАНМАЛЛИ ÇУРТĔНЧИ ÇИТМЕНЛĔХСЕНЕ ПĔТЕРМЕЛЛЕ

Сĕнтĕрвăрри хулинчен инçе мар. Атăл хĕрринчи вăрманта Отечественнăй вăрçа инваличĕсем валли канмалли çурт уçнă. Кăçал ку çуртра пурĕ 600 инвалид канса хăйсен сывлăхĕсене çирĕплетмелле. Анчах кану çурчĕ хăйĕн ĕçне çителĕклĕ пурнăçласа пыраймасть. Май уйăхĕнче кунта 100 çын канмалла пулнă. Вĕсене кĕтсе илме хатĕрленсе çитмен пирки ку уйăхра пĕр çын та канакан пулман. Июнь уйăхĕнче 100 çын пулмалла пулсан, уйăх пĕтнĕ çĕре 11 çын кăна юлнă, ыттисем пăрахса кайнă. Июль уйăхĕнче 60 инвалид пуçтарăннă та, 5—6 кун пурăннă хыççăн çурри ытла пăрахса кайнă.

Мĕншĕн инвалидсем канмалли çуртран вăхăтсăр пăрахса каяççĕ?

Кунта инвалидсене канма чи кирлĕ условисене те туса паман. Культурăллăмассăллă ĕç çинчен аса та илмеççĕ. Радио, патефон, музыка инструменчĕсем, кĕнекесем илсе вулама библиотека çук. Пушă вăхăта лайăх йĕркелес тĕлĕшпе никам та нимĕн те тумасть. Культработница Борзова юлташ вăхăта Сĕнтĕрвăрри-пе Шупашкара чупсах ирттерет.

Апат-çимĕçе тирпейсĕр тата начар хатĕрлеççĕ. Тарелкăсем, кашăксем, вилкăсем çитмеççĕ. Çавна пула столовăйĕнче яланах черет. Стакансем çук пирки чей апат çинĕ тарелкăсемпех ĕçтереççĕ.

Выртса тăмалли пулĕмсенче таса мар, матрацсемпе простынясем хуралса пĕтнĕ, вĕсене улăштармаççĕ. Директор Лепаев ĕнисемпе качакисем, сыснисем пур çĕре те пырса вараласçĕ. Сысна çурисемпе качака путеккисем кухньăна, столовăя кĕрсе чупса çÿреççĕ. Атăл вунă утăмрах пулин те, кимĕсемпе çÿрессине, пулă тытассине йĕркелемен. Юнашар колхозсенче çăмарта, сĕт-çу йÿнĕ хакпах сутаççĕ. Вĕсене кану çуртне илсе пырас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

Çитменлĕхсем çинчен канмалли çурт директорне Лепаев юлташа пĕрре кăна мар калана. Анчах вăл канакансене тивĕçлĕ условисем туса парас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть.

— Килĕшмест пулсан, кайăр. Сире вăйпа тытса усрамастăп,—тет вăл.

Чăваш АССР Социальнăй Обеспечени Халăх Комиссариатĕнче çак çитменлĕхсем çинчен пĕлеççĕ-ши? Пĕлмеççĕ пулсан, кайса тĕрĕслеме сĕнетпĕр. Директор Лепаев пирки çакна калатпăр:

— Ĕçлес килмест пулсан, кайтăр. Ăна вăйпа тытса усрас мар.

Орденоносец Г. ИСАЕВ.
Отечественнăй вăрçă инваличĕ, гвардии старши лейтенанчĕ.

Шкул çине тимĕрĕрĕн пăхакансем

КАНАШ. Сĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланасси çур уйăх кăна юлчĕ. Çапла пулин те районри хăшпĕр шкулсем вĕренÿ çулне кĕтсе илме хатĕрленсе çитмен-ха.

Шаккăлти вăтам шкул сĕнĕ вĕренÿ çулне япăх хатĕрленет. Шкулăн кантăкĕсем çĕмĕрлсе пĕтнĕ, алăкĕсем чалăпса кайнă. Досксемпе партăсем юсавлă мар, юсавлисене те сăрламан.

Шкулăн план тăрăх 250 кубометр вутă касса турттармалла пулсан, ку тарана çитсе 100 кубометр кăна хатĕрленĕ. Турттарасси вара тата япăхрах пырать, шкул патне пурĕ те 15 кубометр кăна турттарнă.

«Искра» колхоз председателĕ Андрианова юлташ шкула çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленме пулăшмасть.

— Эпĕ шкулшăн ответлă мар, манăн унсăр та ĕç нумай,—тет вăл пулăшу ыйтма пырсан.

Ялсовет председателĕ Кошкин юлташ та шкул ĕçĕпе сахал интересленет. Вăл ку ĕçе шкул директорĕ хăй пĕччен тăвасса шанса ларать.

Пахчаçимĕç вăрлăхĕсем çителĕклĕ туса илер

Комсомольски районри 18 колхоз вăрлăхăн пахчаçимĕç лартса тăваççĕ. Тăманлă Выслипри Сталин ячĕпе тăракан колхозра вăрлăхăн акнă 0,25 гектар купăстана, 1 гектар кишĕре, 0,25 гектар помидора, 2 гектар хăяра, 2 гектар пахча пăрçине (бобы) лайăх пăхса çитĕнтереççĕ. Пахчаçимĕçсен вăрлăхĕсене ÿстерсе илес тĕлĕшпе ятарласа тунă звено ĕçлет. Вăл звенона ĕçчен колхозница П. Мурзаева юлташ ертсе пырать.

Вăрлăхăн лартнă пахчаçимĕçе звено виçĕ хутчен сумланă, кăпкалатнă тата икĕ хутчен апатлантарнă. Кунта хăйсене валли кăна мар, кÿршĕри колхозсене сутма та çителĕклĕ вăрлăх туса илме шутлаççĕ.

Асанкассинчи Ульянов ячĕпе тăракан колхозра пахчаçимĕç туса илес енĕпе Г. Пикеев юлташ ертсе пыракан звено ĕçлет. Кунта та вăрлăхăн акнă пахчаçимĕçсем лайăх çитĕнеççĕ. «Красный маяк», «Искра», «Красное Сормово», Красин ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсем те хăйсене валли тата «Сортсемовощь» конторине сутмалăх та вăрлăх хатĕрлеççĕ.

Анчах та уйрăм колхозсем пахчаçимĕç вăрлăхĕ туса илес ĕç çине кирлĕ пек пăхмаççĕ-ха. «Пролетарий», «Новая жизнь» колхозсенче вăрлăхăн лартнă кăшмансем çумкурăк айне пулнă. Ленин ячĕпе тăракан колхозра пулса çитнĕ çарăк вăрлăхне вăхăтра пухса илеймесĕр тăкăнтарса янă.

Пахчаçимĕç вăрлăхне туса илес ĕçе хакламанни сиенлĕ. Колхозăн вăрлăх пулман пирки çуркунне нумайĕшĕсем, вăхăтра акманнине пула, лайăх тухăçлă пахчаçимĕç туса илеймеççĕ. Пахчаçимĕç вăрлăхĕ туса илекен колхозсем государствăна обязательнăй йĕркепе паракан тĕштыра вырăнне пама пултараççĕ. Вăл колхозăн тырă фондне перекетлесе хăварать тата нумай тырпула хатĕрлев пунктне турттарассинчен хăтарать.

Çакна шута илсе, кашни колхозăн пахчаçимĕç вăрлăхне вăхăтра тата типтерлĕн пухса кĕртмелле, ытлашши пахчаçимĕç вăрлăхне «Сортсемовощь» складне памалла.

Г. СКВОРЦОВ,
Районри «Сортсемовощь» конторин управляющийĕ.

Пĕр сысна ами 25 çурă тунă

Куславкка районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозра шурă-акăлчан йăхĕнчен тухнă шултăра сысна ами пĕр вăхăтрах 25 çурă туса панă. Çурăсем пурте лайăх ÿсеççĕ.

Шурă-акăлчан йăхлĕ шултăра сыснасем ытти йăхлă сыснасенчен нумай çурă тунипе палăрса тăраççĕ, анчах та çакăн чухлĕ çурă туни пирĕн республикăра халиччен пулман-ха. Кашни çурламассерен вăтам шутпа 10—11 çурă тунисем часчасах пулнă.

Сысна ами нумай çурă туни хуçалăха тупăш кÿрес енчен пысăк вырăн йышăнать. Вăл обществăллă выльăх-чĕрлĕх шутне хăвăрт ÿстерме май парать. Обществăллă выльăх-чĕрлĕхе кĕске вăхăтра ĕрчетни Хĕрлĕ Çарпа çĕршыв валли, çавăн пекех колхозниксем валли те кĕске вăхăт хушшинчех аш-какай çителĕклĕ туса илме май парать.

Çавăнпа та кашни колхоз умĕнче йышлă çурă тăвакан сысна амисем ĕрчетес задача тăрать. Ку тĕлĕшпе сысна ĕрчетес енĕпе малта пыракансен ĕçри опытне сăнаса вĕренни кирлĕ.

Йышлă çурăсене пăхса çитĕнтерес ĕçре икĕ пĕрлĕ меслетпе усă кураççĕ.

Пĕрремĕш меслет çакăн пек: пур çурăсене те икĕ ушкăна уйăраççĕ. Малтанхи ушкăнне вăйлăрах çурăсене суйласа илмелле, вĕсен шучĕ сысна амин сĕт пама пултаракан чĕччисен шучĕ чухлĕ пулмалла. Иккĕмĕш ушкăна ытти çурăсем пурте юлаççĕ. Çак ушкăнсене вара пĕр сехетрен улăштарса черетпе ĕмĕртес пулать. Çакăн пек тăвас тесен, сысна ами вырнаçнă пÿлĕмпе юнашар тепĕр пÿлĕм тумалла. Сысна çурисене ĕмĕртнĕ хыççăн вĕсене иккĕмĕш пÿлĕме хупмалла, вăл вăхăтра тепĕр ушкăнри çурăсене ĕмĕртме амăш патне ямалла.

Тепĕр меслечĕ çакăн пек пулать: сысна амин сĕт пама пултаракан чĕччисен шутĕнчен ытларах пулнă çурăсене амăшĕнчен илсе пĕр вăхăтра çурланă сахалтарах çурăллă сысна амисем патне ярасçĕ. Çавăнпа та сысна амисене пĕр вăхăтра чуптарса хăвармa тăрăшас пулать. Çапла вара пĕр вăхăтрах темиçе ама çурлама пÿлтарать.

Сысна ами «ют» çурăсене йышăнтăр тесе, вĕсене хăйĕн ытти çурисемпе пĕрле хупаççĕ, унтан нумаях мар креолин янă шывпа пĕрхеççĕ. Вара сысна ами ют çурăсене хăйĕннинчен уйăрса илеймест. Çакăн хыççăн сысна ами патне пур çурăсене те ярса ĕмĕртме пулать.

С. КАРПОВ,
Ялхуçалăх наукисен кандидачĕ.

Эмель тумалли курăксемпе çимĕççем ытларах пухар

Пирĕн республикăра эмель тума юрăхлă курăксемпе çимĕççем нумай пухма пулать. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче хамăрăн республикăра пухнă курăксемпе çимĕççенчен чылай тĕрлĕ эмель туса хатĕрленĕ.

Вăрмар тата ытти районсенче халĕ ромашка, пустырник, калемпĕр (тмин), шăлан çырли, ыраш амăшĕ пухма пулать.

Ромашкăн тăррине касса илсе хĕвел лекмен çĕрте типĕтмелле. Касасса кăнтăрла сывлăм типсе çитсен касмалла. Пустырник—пахчасенче, картасем çумĕнче, хăмла вырăнĕсенче ÿсет. Унăн çулçипе чечекне пухса ромашка пекех типĕтес пулать. Калемпĕр пур тĕлте те ÿсет, ăна аврипех тăпăлтарса вăрлăхне çапса илмелле, унтан алапа аласа тасатмалла. Шăлан çырли (шиповник) сентябрь, октябрь, ноябрь уйăхĕсенче пиçсе çитет. Татнă хыççăн хĕвел çинче е çăкăр пиçсе тухнă кăмакара типĕтмелле. Анчах та çунса хураласран сыхланмалла. Ыраш амăшне ыраш вырнă чухне е çапса аланă чухне сортировка айĕнчен пухса илмелле.

Çак ĕççене пионерсемпе шкул ачисем те тума пултараççĕ. Малтанлăха вăл пĕчĕк ĕç пек туйăнать, анчах халĕ вăрçă вăхăтĕнче эмель валли кирлĕ курăксемпе çимĕççем пухнин калама çук паха ĕç пулса тăрать. Çакна ялти учительсем, врачсемпе фельдшерсем тата аптекарьсем халăха ăнлантарса памалла, эмель валли курăксемпе çимĕççем пухассине организацилемелле.

Аптекарь П. ПЕТРОВ.

Апробаторсен курсĕ пулса иртнĕ

Вăрмар районĕнчи Кавал госсортучастокĕ çумĕнче çĕрулмине апробаци тăвакансен (сортлăха тĕрĕслекенсен) курсĕ пулса иртнĕ. Курсран 3 агротехник тата 19 агроном вĕренсе тухнă. Курса агроном Г. Молостов ертсе пынă. «Маяк» колхоз вĕренекенсене кунне икĕ хутчен вĕри апат çитернĕ, унсăр пусне практикăллă ĕççене те çак колхозрах туса ирттернĕ.

Францири вăхăтлăх государство влаçĕ çинчен кăлармалли законăн проекчĕ

ПАРИЖ, августăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 16-мĕшĕнче Францири министрсен совечĕ влаçа организацилесси çинчен кăлармалли законăн проектне йышăннă. Ку закон çĕнĕ конституцие туса хатĕрличчен, урăхла каласан, учредительнăй пухăва суйланă хыççăн пĕр 7 уйăх хушши вăйра пулать. Ку проекта халăха референдум йĕркипе çирĕплетме сĕнеççĕ. Влаçа организацилесси çинчен йышăнмалли çĕнĕ законăн проектне Венсан Ориоль социалист сĕнĕвĕ тăрăх тунă. Вăл ăна Кунсультаци ассамблейинче конституци проектне сÿтсе-явнă вăхăтра сĕннĕ пулнă.

Закон проектĕнче çапла каланă:

«1-мĕш статья. 1945 çулхи октябрĕн 21-мĕшĕнче сасăласа суйланă Учредительнăй Пуху, Пуху составне кĕрекен членсен ытларах пайĕ ÿççăн сасăласа, çийĕнчех республикăн вăхăтлăх правительствин председательне суйлать. Председатель вара правительство тăвать те ăна ырлама Пухăва тăратать, çакăнпа пĕрлех вăл тата Пухăва правительствăн программине те тăратать. Правительство Пуху умĕнче ответлă пулса тăрать, анчах та Пуху унăн кирек епле те пулин решенине е кредитне йышăнманнишĕн правительство вырăнтан тухма пултараймастъ.

2-мĕш статья. Пуху çĕнĕ конституцие туса хатĕрлет.

3-мĕш статья. Конституцие Пуху йышăннă хыççăн пĕр уйăх хушшинче ăна референдум йĕркипе çирĕплетме Франци суйлавçисене параççĕ.

4-мĕш статья. Пухăвăн законсем йышăнса кăлармалли власть пур. Вăл правительствăпа пĕртанах законсем кăларма сĕнме пултарать. Законсене пĕлтерме кирлĕ пĕр уйăх хушшинче правительство законĕсене иккĕмĕш хут сÿтсе-явнă сĕнме пултарать. Çакăн пек сÿтсе-явнă хыççăн закона йышăнасси çинчен пĕрремĕш хут сасăланине Пуху членĕсен ытларах пайĕ сасăласа çирĕплетет пулсан, вăл закон вара виçĕ кун хушшинче вăя кĕрет.

5-мĕш статья. Пуху бюджета сасăласа çирĕплетет. Анчах вăл тăкаксем тума ирĕк пама пултараймасть.

6-мĕш статья. Пухун полномочийĕ çĕнĕ конституци вăя кĕнĕ кун пĕтет, анчах ку срок Пухăвăн пĕрремĕш ларăвĕ хыççăн 7 уйăхран ытла пулмалла мар.

7-мĕш статья. Суйлавçăсем Пуху туса хатĕрленĕ конституцие пăрахăçласан, е 6-мĕш статьяра кăтартнă срокра Пуху ниепле конституци те туса хатĕрлемест пулсан, вара çийĕнчех малтанхи йĕркепех çĕнĕ Учредительнăй Пуху суйлаççĕ. Ку Пухура полномочисем те çавăн пекех пулаççĕ, вăл суйланă хыççăнхи пĕрремĕш ытларикун пухăнать.

8-мĕш статья. Çак законăн, Франци халăхĕ йышăннăскерĕн, конституци пĕлтерĕшĕ пур, ăна государство законĕ вырăнне хурса пурнăçа кĕртсе пыраççĕ».

Иранри лару-тăру

ТЕГЕРАН, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). **(Вăхăтра ситереймен).** «Рахбар» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра Иран Азербайджанĕнче реакцилле элементсен киревсĕр ĕçĕсем чылаях вăйланнă.

Çапла, темиçе кун каярах Лигван ялĕнче (Тавриз сывăхĕнче) Хаджи Эхтешам Хан помещик хăйĕн хĕçпăшалланнă ушкăнĕпе çак ял çыннисен митингне хăваласа салатнă. Митинга салатнă чухне халăх партийĕн икĕ членне вĕлернĕ. Тепĕр кунне çак ĕçе тĕнчесе тухмашкăн следователь килнĕ.

Эхтешам Ханăн ывăлĕсем килнисене пеме тытăннă та виçĕ çынна вĕлернĕ, тепĕр çынна амантнă.

Темиçе кун каярах Тавриз хулинче, Тавриз дивизийĕн командирĕн Дерехшани генералăн приказĕ тăрăх салтаксен отрячĕ тĕрмене çĕмĕрсе кĕнĕ те, тĕрмере лараканнисем тарма шутлаççĕ тесе, вĕсене пеме тытăннă. 7 çынна вĕлернĕ, 11 çынна амантнă.

Хан тата вырăнти власçсем çакнашкал ĕçсем туни Тавризри халăха пăлхантарма тытăннă. Августăн 12-мĕшĕнче Тавриз çыннисен пысăк ушкăнĕ телеграф станцине пынă та двор министрне Алана, меджлис председательне, халăх партийĕн депутачĕсене телеграфпа чĕнсе вĕсене юлашки хыпарсем çинчен пĕлтернĕ. Тавриз çыннисем çакăншăн айăплă Дерехшани генерала вырăнтан кăларма ыйтнă. Лешсем вара тивĕçлĕ мерăсем йышăнма сăмах панă.

Августăн 13-мĕшĕнче меджлис депутачĕсен ытларах пайĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура премьер-министр Садр Тавризри лару-тăру çинчен каласа панă.

Хаçатсенче ку ыйту тĕлĕшпе шалти ĕç министерствин официальнăй пĕлтерÿне пичетлесе кăларнă. Кунсăр пусне, хăшпĕр хаçатсенче Тавриз халăхĕсен представителĕсем августăн 12-мĕшĕнче Тавризран Тегерана телеграфпа панă пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă. Çак материалсем тăрăх, çавăн пекех тата ытти сведенисем тăрăх, Азербайджанра юлашки вăхăтра пулса иртнĕ ĕççене çапла ăнлантарса пама пултать:

Тавризран панă пĕлтерÿ тăрăх, Тавриз тĕрминче даракансем хушшинче хресченсем 500 çын ытла пулнă. Вăрçăра союзниксем çĕнтернĕ ятпа çак тĕрмере лараканнисене амнисти пама требовани кăларса тăратнă, мĕншĕн тесен вĕсенчен 90 процентне нимĕн айăпсăрах хупнă пулнă. Анчах та Дерехшани генералăн приказĕ тăрăх, тĕрмене 60 çынтан тăракан отряд янă. Çав отряд тĕрмере лараканнисене пеме тытăннă та 7 çынна вĕлернĕ, 11 çынна амантнă.

Асăннă пĕлтерÿре çапла каланă: юлашки темиçе кун хушшинче Сагемиш ялĕнче реакционерсем халăх партийĕн пĕр членне, Даоджерт ялĕнче тепĕр 2 члена вĕлернĕ. Çак ĕççене хирĕçлесе протест тăвакан çынсене власспемпе жандармери арестлесе тĕрмене хупаççĕ, çав вăхăтрах преступниксене нимĕн те тумаççĕ. Лигван ялĕнче вĕлернĕ çынсен виллисене Тавриз хулине илсе пынă та августăн 12-мĕшĕнче вĕсене хула урамĕсем тăрăх йăтса тухнă, кунта вара питĕ нумай халăх пухăннă. Базарсемпе магазинсене хупса лартнă. Хулари тарăхса кайнă çынсен ушкăнĕ Тавриз прокурорне Мусевине тапăннă.

Халăх партийĕн руководителĕсем хутшăннине пула кăна Мусевине хĕнесе тăкман. Унтан халăхăн пысăк ушкăнĕ телеграф станцине кайнă та двор министрне Алана, меджлис председательне Мосташа-Эд-Довлеме, Мозасар Задене, Моссадыка, Садегине, Ипеккчиянана тата халăх партийĕн ытти депутачĕсене те телеграф аппарачĕ патне чĕнсе илнĕ. Вĕсем Дерехшани генерала, жандармери начальникне тата прокурора суда пама ыйтнă. Вĕсем çапла каланă: влассем тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасан, халăх восстани туса помещиксемпе реакционерсене хĕçпăшалсăрлатма пултарать, тенĕ. Тавриз халăхĕн çак требованине «Дад» тата «Иране-ма» хаçатсем Тавризра пĕтĕмĕшле восстани пуçланнă, восстани тăвакансем хулари учрежденисене тытса илнĕ тата çар чăçĕсене хĕçпăшалсăрлатнă, тесе пичетлесе кăларнă пулмалла. Меджлис депутачĕсен ытларах пайĕн пухăвĕнче августăн 13-мĕшĕнче Садр çапла каланă: халĕ Тавризра пурте лăпланнă, восстани çинчен, хулари учрежденисене тытса илни çинчен, çавăн пекех çар чăçĕсене хĕçпăшалсăрлатни çинчен хаçатсем пĕлтерни пĕри те тĕрĕс мар. Çавăн пекех Садр: ку ĕçе тĕнчесе тухмашкăн правительство Тавриза васкасах комисси ярать, тесе пĕлтернĕ. Вăл сывăхри икĕ-виçĕ кун хушшинчех Азербайджанра çĕнĕ генерал-губернатор лартма сăмах панă.

«Кейхан», «Шефаг», «Эгдам», «Растихизе», «Иран», «Иране-ма», «Неджате иран», «Рахбар», «Ферман» тата демократиллĕ ытти хаçатсем те правительствăна тата меджлис депутачĕсен ытларах пайне ответсăр ĕççем тунăшăн айăплаççĕ. Вĕсем йĕркесĕрлĕх тума провокацисем тăваççĕ, сăмахран, Иран Азербайджанĕнче юлашки вăхăтра пулса иртнĕ ĕççене тума та вĕсем хĕтĕртнĕ.

ТЕГЕРАН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Азербайджанра пулса иртнĕ ĕççене тĕпченмешкĕн çак кунсенчех комисси туха каять. Комисси составне Джахамбани генерал тата Иран жандармерийĕн начальникĕ Хосоровани кĕреççĕ.

Тегеранри хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: Азербайджанра генерал-губернатор пулма правительство Иранăн премьер-министрĕ пулнă Баята палăртнă.

РУМЫНИРИ ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКĔСЕМ ТĔЛĔШПЕ ЙЫШĂННĂ ПРИГОВОРСЕМ

БУХАРЕСТ, августăн 19-мĕшĕ, (ТАСС). Вăрçă преступникĕсен 8-мĕш ушкăнне суд туса пĕтернĕ. Халăх трибуналĕ Гинерару генерала, Бусеичану подполковника, Флориан майора, Гю, Торня, Градинер кĕçĕн офицерсене ĕмĕрлĕхех каторгăра ĕçлеттерсе усрамалла тунă (юлашки 4 çынна хăйсемсĕрех суд тунă). 9 айăпланакана 3 султан пуçласа 20 çула çити каторгăра ĕçлеттермелле тата тĕрмере хупса усрамалла тунă. Пĕр çынна тÿрре кăларнă. Каторгăра ĕçлеттерсе усрамалла тунисенне пуринне те пурлăхĕсене туртса илеççĕ.

АВСТРИРИ ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКĔСЕМ ПИРКИ ЙЫШĂННА СУД ПРИГОВОРĔ

ВЕНА, августăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 17-мĕшĕнче Вена хулинчи халăх судĕ вăрçă преступникĕсене 4 çынна, нимĕçсен Энгерау хулинчи концентрацилле лагерĕнче тем чухлĕ çынна вĕлернĕскерсене, айăпласа приговор йышăннă. Çапла преступниксенчен виççĕшне—Рудольф Кронбергера, Алоис Франка тата Вильгельм Мейнтельфеле суд вĕлермелле тунă, тăваттăмĕшне—Конрад Полиновскине 8 çулăха каторгăлă ĕçе ямалла тунă. Австри общественноçĕ халăх судĕн приговорне пысăк кăмăлпа хапăл туса йышăннă.

ЛОНДОНРИ РАДИО БИРМĂРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, августăн 18-мĕшĕ. (ТАСС) Лондонри радио Бирмăран илнĕ хыпарсене панă. Çав хыпарсем Бирмăра «тĕллипаллисĕр вăрçă ĕçĕсем» пулса пыни çинчен каласçĕ.

Ответлă редактор
В. Я. ЯКОВЛЕВ.

МАРИСЕН ОПТИКĂПА МЕХАНИКА ТЕХНИКУМĔ КĂÇАЛ КĔРКУННЕ I ТАТА II-МĔШ КУРССЕНЕ ВĔРЕНМЕ ИЛЕССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ.

Техникум оптикăпа механика приборĕсем тата метала сивĕлле ĕçлекен техник-механиксем вĕрентсе кăларать.

Техникумра 4 çул вĕренмелле.

Техникума вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене, вырăс чĕлхипе тата литературипе, математикăпа тата СССР Конституцийĕпе экзамен тытнисене илеççĕ. Отлично вĕренсе тухнисене экзаменсăрах илеççĕ.

Вĕренме илнисене стипенди параççĕ, общежитие вырнаçтараççĕ, вырăс тăма вырăн параççĕ, апат çитереççĕ тата промышленноçри рабочисемпе пĕртан промышленность таварĕсем параççĕ.

Арçын ачасене Хĕрлĕ Çара илессинчен отсрочка параççĕ.

Заявленисене июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 10-мĕшĕччен илеççĕ. Вĕренме кĕмеллн экзаменсем сентябрĕн 10-мĕшĕне 25-мĕшĕ хушшинче пуçлаççĕ.

Техникумра октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Марийская АССР, гор. Йошкар-Ола, Советская, 93, Оптикомеханический техникум.

Çитĕннисен заочнăй вăтам шкулĕ 5—10-мĕш классене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Мĕн чухлĕ вĕреннине кăтартакан документ тăратакансене тивĕçлĕ классене вĕренме экзаменсăрах илеççĕ.

Заявленине пĕрле çак документсене памалла: мĕн чухлĕ вĕреннине кăтартакан документ, хăçан çуралнине кăтартакан документ тата автобиографи.

Заявленисене ертсе пынă çĕнĕ çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Чернышевского, 5.

Шупашкарти Электромеханика техникумне грузовой машина çинче ĕçлеме шофер кирлĕ.

Пĕччен çынна общежитие вырнаçтараççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Карла Маркса, 82.

Тырă вырас тата государствăна тырă парас ĕçре çамрăк хастарлăхпа ĕçлер

Колхоз уйăрĕсенче хĕрÿ ĕçсем пыраççĕ. Тырпула вăхăтра тата пĕр тăккаласăр пухса кĕртмелле, государствăна тырă памалла, кĕрхи тырăсене акса хăвармалла. Çак ĕççене пурне те, нимĕнле çанталăка пăхмасăр, вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса ирттермелле. Комсомолецсемпе çамрăксем пур ĕçре те малта пулса, лайăх тĕслĕхсем кăтартса памалла.

Малта пыракан комсомол организацийĕсем çакна лайăх ăнланса илнĕ. Вăрнар, Елчĕк, Чкаловски, Чурачăк, Вăрмар, Советски тата ытти районсенче те комсомолецсемпе çамрăксем тырă вырас, государствăна тырă парас тата кĕрхи тырăсем акса хăварас ĕçсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Вăл районсенче комсомолецсемпе çамрăксенчен ятарласа бригадăсем организацилеççĕ. Вăрнар районĕнче кăна тырă вырнă çĕрте 470 комсомолец, вĕсенчен 58-шĕ машиноведсем пулса ĕçлеççĕ. Кольповкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозра Мария Мишанинăпа Екатерина Трошкина комсомолкăсем алăпа 0,19 гектар вырасçĕ. Кăмăлла колхозăнче М. Кошкина комсомолка ертсе пыракан бригада хăйне çирĕплетсе панă участокĕри тырра виçĕ кунта вырса пĕтернĕ.

Шупашкар районĕнчи «Кукшум» колхозра комсомолецсемпе çамрăксем хастар ĕçленине пула кĕрхи тырăсене 5 кун хушшинче вырса пĕтернĕ. Кунта 11 комсомолец уйăрĕ ĕçĕнче тимлĕн ĕçлеççĕ. Колхозри звеносене комсомолецсемпе çамрăксĕм ертсе пыраççĕ. Звеносем хушшинче социализмлă ăмăртăва лайăх йĕркелени, боевой листоксене вăхăтра кăларма тăни тата агитацине массăллă ĕçе кирлĕ пек туса пыни тырпула хăварт та пĕр тăкаласăр пухса кĕртме пулăшрĕ. Ку колхозра государствăна тырă леçме транспорт бригади организациленĕ. Бригадăна Мария Данилова комсомолка ертсе пырать. Бригада государствăна 20 тонна ытла тырă леçсе панă.

Анчах тырпул пухса кĕртессипе государствăна тырă парас ĕçре комсомолăн пур организацийĕсем те çителĕклĕ ĕçлеççĕ теме çук-ха. Комсомол организацийĕсем чылайĕшĕ партипе совет тата çĕрĕç органĕсене кирлĕ пек пулăшса пымаççĕ. Колхозри мĕнпур çамрăксене тырпула пухса кĕме, ăван çапма тата кĕрхи тырăсене акма мобилизацилемен, вĕсене кирлĕ пек ертсе пымаççĕ. Уйрăмах ку тĕлĕшпе Кувакино, Йĕпреç, Улатăр, Ишлей, Первомайски, Шупашкар тата ытти хăшпĕр районсенче начар ĕçлеççĕ.

Çак кунсенче ВЛКСМ Обком бюровĕ Шупашкар районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе мĕнле хутшăнса ĕçлени çинчен сÿтсе-явăрĕ. ВЛКСМ Обком бюровĕ комсомолăн Шупашкар райкомĕ колхозсенчи организацисене çителĕксĕр ертсе пынине, комсомолецсемпе çамрăксен вăйне тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе çителĕксĕр мобилизацилеммне палăртрĕ. Ку районри колхозсенче комсомолецсемпе çамрăксенчен ăван çапма тата государствăна тырă турттарма организацилеммелле. Çавна пула ĕнтĕ кунта кĕрхи тырăсене çурринне те вырман. Государствăна тырă леçме транспорт бригади организацилемен, ут хатĕрĕсем çителĕксĕр, 45 лаша валли те 12 урапа çеç. Çавăн пирки вара кунта государствăна тырă вăхăтра леçсе параймаççĕ.

Кунта ĕçе тĕпренех çĕнетсе лайăхлатмалла, комсомолецсемпе çамрăксен мĕнпур вăйне тырă вырса пуçтарма, кунне-çĕрне пĕлмесĕр аван çапса, государствăна тырă пама тата кĕрхи тырăсене акса хăварма мобилизацилемелле. Çак ĕççенче кашни комсомолец, кашни çамрăк ырми-канми ĕçлетĕр, пур ĕçре те примерлă пултăр, ытти сене хăй хыççăн ертсе пыма пултартăр.

Халĕ уяр кунсем тăраççĕ. Çак паха вăхăтăн кашни сехечĕпе туллин усă курмалла. Тырăсене вырса пĕтернипе пĕрлех турттарса кăпана хывмалла. Ĕç кунпах пĕтмест-ха. Кăпанти тырра вăхăтра çапса пуçтарса хумалла. Çавăнпа пĕр тăхтаса тăмасăр аван çапма тытăнмалла. Ку ĕçе кăнтăрла та çĕрле те ăнăçлă тума пулать. Çакăнта комсомолецсемпе çамрăксен пуçарса ертсе пыракансем пулмалла. МТС директорĕсемпе, колхоз правленийĕсемпе килĕшсе, аван çапма ятарласа бригадăсем организацилемелле. Вăл бригадăсем аван çапас ĕçе ертсе пыччăр; молотилкăсемпе ытти машинăсене, ĕç хатĕрĕсене юсавлă тытчăр.

Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра тăккаланчăксемпе кĕрешес ĕçре колхозсене пионерсемпе шкул ачисем пумай пулăшма пултараççĕ. Пучах пуçтарасси, çĕмелсене хуралласси—пионерсемпе шкул ачисен ĕçĕ, вĕсене ку ĕçе хутшăнтармалла кăна. Анчах хăшпĕр колхозсенче пучах пуçтарассине кирлĕ ĕç вырăнне хумаççĕ. Итем çинче, амбарсем патĕнче е турттарнă чухне çул çинче тырпула типтерлĕ тытассине те йĕркелемелле.

Государствăна тырă вăхăтра парса татасси—комсомол организацийĕсем умĕнче тăракан пысăк задача пулса тăрать. Ку тĕлĕшпе комсомолецсем иртнĕ çулсенче начар мар ĕçлерĕç. Парти организацийĕсемпе килĕшсе, кăçал та государствăна тырă памалли воскресниксем, хĕрлĕ обозсем организацилемелле. Транспорт бригадисем хатĕрлев пункчĕсене кунне пĕр хут кăна мар, кирек епле çанталăкра та 2—3 хутчен кайса тырă леçме пултарччăр. Государствăна тырă памалли график пĕр колхозра та, районра та ан пăсăлтăр. Çавăншăн кĕрешмелле те ĕнтĕ комсомолецсемпе колхоз çамрăкĕсен.

Халĕ колхозсенче кĕрхи тырă акаççĕ. Кĕракине кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерни — килес çулхи вăйлă тырпул никĕçĕ. Çавăнпа ку ĕçре те комсомолецсемпе çамрăксем малта пыма тивĕç. Вăрнар районĕнчи Кольповкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозра кĕракинче 10 комсомолец ĕçлет. М. Гусев, В. Захаров комсомолецсем кулленхи нормăна 200 — 220 процент тултараççĕ, 0,20 гектар вырăнне 0,50 гектар сухалаççĕ.

Комсомол райкомĕсемпе пуçламăш организацисен колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче массăллă агитации ĕçне тата лайăхрах туса пымалла. Комсомолец хăйĕн лайăх ĕçĕпе те, сăмахпа та агитатор пулса тăтăр.

Комсомол организацийĕсен ĕçне колхоз, МТС ялхуçалăх ĕçĕсене мĕнле туса ирттернине кура хаклаççĕ. Çавăнпа ялхуçалăхĕнчи чи ответлă тапхăрта комсомолецсен нихăçанхинчен те хастарлăрах, нихăçанхинчен те тимлĕрех ĕçлемелле.

Г. ПЕТРУХИН,
ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ.

Г. М. ДИМИТРОВА БОЛГАРИ ХАЛĂХ ПУХĂВНЕ СУЙЛАМА КАНДИДАТА ТĂРАТНĂ

Георгий Михайлович Димитрова Отечественнăй фронт списокĕ тăрăх Болгари халăх пухăвне суйлама кандидата тăратнă. Çавна пула вăл СССР Верховный Совет Президиумĕнчен хăйне СССР Верховный Совет депутачĕн обязанноçĕсенчен хăтарма тата СССР гражданствинчен кăларма ыйтнă. СССР Верховный Совет Президиумĕ Г. М. Димитров ыйтнине килĕшн